**Внеклассное мероприятие по родной литературе**

# „Вĕренни мулран хаклă”

***Андреева Лариса Анатольевна,***
***учитель родного языка и литературы***
***высшей квалификационной категории***
***МБОУ «Верхнелащинская ООШ»***
***Буинского муниципального района***
***Республики Татарстан***

***Тĕллевсем:***
1. Вĕренекенсен пĕлӳ, хăнăху туянас, шухăшлас, ĕçлес пултарулăхне аталантарасси.
2. Вĕренекенсен калаçу пуплевне аталантарасси.
3. Илемлĕхе курма, тăван чĕлхене хисеплеме хăнăхтарасси.

## 1.Ваттисен сăмахĕ каланă тăрăх.

- Выçă чăх тĕлĕкĕнче мĕн курать? (тулă)
- Мĕн шывра та путмасть, вутра та çунмасть? (тĕрĕслĕх)
- Ăçта хăлхасем ӳсмеççĕ? [çамкаран çӳлĕрех)
- Куккук мĕншĕн йĕрет? (ачисене хăй ӳстерейменнишĕн)
- Пушар сӳнтерме мĕнпе килмеççĕ?(пуш алăпа)
- Паян тумалли ĕçе хăçана хăвармаççĕ?(ырана)
- Çын аллинчи кукăль мĕнле курăнать?(пысăк)
- Тумлантарсан тунката мĕн пек пулать?(пукане пек)
- Упине тытиччен мĕнсӳмеççĕ?(тирне)
- Тăлăх йывăçа мĕн хуçать?(тăвăл)
- Шухăшăн мĕнĕ çук? (вĕçĕ)
- Каçа хирĕç мĕн тытăнмаççĕ?(ĕç)
- Çамрăк ĕмĕр миçе килет?(пĕрре)
- Амăшне пăхса кама качча илеççĕ?(хĕрне)
- Хăнара миçе кун аван?(виçĕ)

- Вуттăн мĕн вăрăм?(алли)

- Качакан сухалĕ вăрăм та мĕнĕ кĕске?(Ăсĕ)
- Пулă ăçтан çĕрме тытăнать?(пуçĕнчен)
- Кахал çине çумăр миçе кун малтан ÿкет?(виçĕ)
- Уй куçлă , вăрман мĕнле?(Хăлхаллă)
- Вĕрмен йытă мĕнле çыртать?(хытă)
- Вăйран мĕн тухать?(Вăкăр)
- Макăрман ачана мĕн памаççĕ?(Чĕчĕ)
- Çăкăра чăмласа çимелле, сăмаха мĕнле каламалла?(Шухăшласа)
- Яш ĕмĕр миçе килмест?(иккĕ)
- Çăвартан тухнине мĕнп хуса çитеймĕн?(утпа)
- Чĕлхе ăçта çитерет?(Мускава)
- Ăс тенине хăçанччен пухаççĕ?(мĕн виличчен)
- Ĕнсе хыçнипе мĕн пулмасть?(Ĕç)
- Ĕçрен мĕн хăрать?(куç)

### 2. Ваттисен сăмахĕсенче тĕл пулакан числосем

Ушкăнсем пĕрин  хыççăн тепри хисеп ячĕсем тĕл пулакан ваттисен сăмахĕсене калаççĕ

- 7виç те 1 кас.
- 100 пуличчен 100 тус пултăр.
- Пуриншĕн те 1 хĕвел.
- 2 куяна хăвалакан 1 те тытайман.
- Пăсма 1 кун, тума 3 кун.
- 1 хулă хуçăлать, 1000 хулă хуçăлмасть.
- 1 пус 1 тенке перекетлет.
- 3 хĕрарăм 1 пасар.
- 2 алла 1 ĕç.
- 4 пиччен 1 çĕлĕк.

### 3.Пĕлтерĕшĕ тăрăх ваттисе сăмахне тупмалла.

- Кильти выльăх – чĕрлĕх. Вăл çимелли паракан япала хăйне çитернинчен килет. (Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче)
- Маларах ÿкессине пĕлнĕ пулсан çав вырăна мĕн те пулсан сарăттăм.
  (Ÿкессе пĕлнĕ пулсан тÿшек сарăттăм)
- Вăрманти чĕр чуна унăн тушкин тăвата пайĕ тăрантараççĕ.
  (Кашкăра урисем тăрантараççĕ)
- Йывăçран каснă тĕмескене илемлетеççĕ те, вăл хитреленет

(Тумлантарсан тунката та пукане)

- Ҫаврака япала, ăна вĕҫен кайăк тăвать, анчах та вĕсем вĕҫен кайăкран ăслăрах пулаймаççĕ. (Ҫăмарти чăххине вĕрентмест)
- Пĕр ĕҫе тăвиччен тепĕр ĕҫне темиҫе хут тума хушаççĕ.
  (Ҫиччĕ виҫ те пĕрре кас).
- Пĕр вĕҫен кайăк яланах ир тăнă, унăн хырăмĕ те тутă пулнă.
  (Ир тăракан ҫерҫи выҫă вилмен).
- Халăх тăвакан ĕҫрен юлма хушман, шуйттан йăхĕнчен юлсан та юрать.
  (Ҫынтан юличчен муртан юл)
- Вĕҫен кайăксене вĕсен тумĕ тăрăх хаклаççĕ, ҫынна унăн алли тăрăх)
  (Кайăк хитре тĕкĕпе, этем хăйĕн ĕҫĕпе)
- Хăй хутран ҫеҫ, тем тума та вĕрентет.
  (Кĕнеке пурне те пĕлет).

### 4. Эпĕ –сана, эсĕ – мана.

(Командăсем пĕр пĕрне ыйтусем параççĕ).

5. Фразеологизмземсем тумалла.

- Пуян ҫын ҫинчен калаканни. (Укҫине кĕреҫепе хырать)
- Тем те пĕр курса ҫÿрекен ҫын ҫинчен (Тĕнче касса ҫÿрет)
- Питĕ хыт кукар ҫын ҫинчен (Хыт пăрҫа)
- Питĕ вăйлă хăранă ҫын ҫинчен (Ҫÿҫĕ вирелле тăнă)
- Час ҫилленекен ҫын ҫинчен (Турти кĕске)

- Вăрлама юратакан (Алли кукăр)
- Улталама юратакан (Йĕпрен пĕрене тăвать)
- Апата тиркекен ҫын (Йĕс пыр)
- Пушар пулсан мĕнле кайăк алхасать (Хĕрлĕ автан)
- Ир – ирех вăранса ĕҫ тытăнакан ҫын ҫинчен (Шăпчăк ыйхăллă ҫын)

### 6. „Ытарлă сăмах” конкурсĕ.

- Выртăнтан хускалмасăр ăҫта путма пулать?(шухăша)
- Ĕмĕртен ĕмĕре мĕн куҫать? (йăла-йĕрке)
- Сутăнман пурлăх(Ăс)
- Мĕнле ҫулпа никамта утса курман (Хур кайăк ҫулĕпе)

- Сунарçă пăшал пенĕ чухне мĕншĕн хăрах куçне хупать? (Иккĕшне те хупсан нимĕн те курăнмасть)
- Шапатан карчăк ăçтан килет?(70 тинĕс леш енчен)
- Хаçатри кĕске стстья (заметка)
- Вĕренӳ çулĕнчи кану вăхăчĕ (Каникул)
- Чăвашсен юмор журналĕ (Капкăн)
- Этемшĕн чи хакли (Пурнăç)

**7. Сăмах çаврăнăшĕсене чăвашла куçар.**

- С легким паром (Ăшши тутлă пултăр).
- Мели, Емеля, твоя неделя. (Чараксăр чĕлхен шăмми çук)
- За словом в карман не полезет (Сăмахшăн кивçене каймасть)
- Экзамены на носу (экзаменсем çывхарса çитрĕç)
- Ни в зуб ногой (Нимĕн те пĕлмест)
- После дождичка в четверг [хăçан та пулин)
- Слон в посудной лавке (мăран çын)
- Хоть шаром покати (Пуш –пушă)
- Плакали денежки (Укçа харама кайрĕ)
- Что в лоб, что по лбу (Апла та капла та)

**8. Пирĕн ăсталăха курсамăр. (Ушкăнсенчен пĕрер номер).**

**9. Жюри пĕтĕмлетĕвĕ.**